25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 12 ШАМАТКУН 121(6358) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлеш

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ ХАÇАЧĔ

Информациллĕ пĕлтерӳ

1943 çулхи июнĕн 10—11-мĕшĕсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çак ыйтусене сӳтсе-яврĕ:

1. Çураки итогĕсем çинчен, тырпулсене пăхса ӳстересси тата 1943 çулти тырпула пухса кĕме хатĕрленесси çинчен (докладчикĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ МАТВЕЕВ юлташ).

2 Республикăра агитациллĕ-массăллă ĕç мĕнле пулса пыни çинчен (докладчикĕ ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ М. АНДРЕЕВ юлташ.)

3. Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстересси тата унăн тухăçлăхне хăпартасси çинчен (докладчикĕ ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен секретарĕ МАРТЫНОВ юлташ).

Çак мĕнпур ыйтусем тăрăх пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум Т. А. АХАЗОВ юлташа, вăл вĕренме кайнă пирки, ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарĕнчен хăтарчĕ тата ВКП(б) Обкомĕн бюро членĕсен составĕнчен кăларчĕ.

Пленум С. П. НИКИТИН юлташа, вăл районра ĕçлеме куçнă пирки, ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕнчен хăтарчĕ тата ВКП(б) Обкомĕн бюро членĕнчен кăларчĕ.

Пленум М. В. ЛИСИН юлташа ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма çирĕплетрĕ тата ăна ВКП(б) Обкомĕн бюро членĕсен составне кĕртрĕ; Г. А. МАРТЫНОВ юлташа ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма çирĕплетрĕ. Çавăн пекех пленум А. А. МИТРОФАНОВА юлташа ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен отделĕн заведующийĕ пулма çирĕплетрĕ.

ВКП(б) ОБКОМĔ.

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳри боевой задачăсем

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулнă XV-мĕш пленумĕ çураки итогĕсем çинчен тата 1943 çулта тырпулсене пăхса çитĕнтерессипе вĕсене пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ тунă доклада сӳтсе-яврĕ. Пленум пирĕн республикăри колхозсем çуракинче тунă çитĕнӳсене тата ĕçри ситменлĕхсене палăртса, вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула пăхса çитĕнтерес тата ăна пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе партипе совет тата çĕрĕç органĕсем умне татăклă задачăсем лартрĕ.

Тăван çĕршыва фронт умĕнчи хăйсен пысăк тивĕçлĕхне ăнланса илсе, Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕпе хавхаланса, орденлă Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен уйхирĕсенче икĕ хут вăя ӳстерсе ĕçлерĕç, сурхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Республикăра кăçалхи çураки калкаллăнрах, агротехникăн чи лайăх срокĕсенче тата пĕлтĕрхинчен 12 кун маларах пулса иртрĕ.

Ярославль облаçĕнчи Горшиха колхозникĕсен пархатарлă пуçарăвне йышăнса, республикăри колхозсем оборона фончĕ валли тата нимĕç оккупанчĕсенчен сиен курнă колхозсене пулăшма планран ирттерсе 6000 ытла гектар тырпул акса хăварчĕç.

Сурхи уйхир ĕçĕсене Вăрнар, Элĕк, Елчĕк, Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем пуринчен ăнăçлăрах туса ирттерчĕç.

Республикăри МТС-сем тракторпа ĕçлемелли плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне ирттерсе тултарчĕç, сурхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса хăварчĕç. Çуракинче МТС-сем хушшинче пынă социализмлă ăмăртура пур енĕпе те Елчĕк МТС-ĕ çĕнтерӳçĕ пулса тухрĕ. Йĕпреç, Шăхасан, Канаш, Комсомольски, Тăвай, Вăрнар, Элĕк МТС-сем лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартрĕç. Халиччен кая юлса пынă Сĕнтĕр, Красноармейски тата Куславкка МТС-сем, кăçалхи çул тракторсемпе çуркунне ĕçлемелли плана тултарса, малтисен ретне тăчĕç.

Малта пыракан районсен руководителĕсем колхозниксемпе колхозницăсен массисене вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтермешкĕн мобилизацилеме пĕлнине кăтартрĕç, çавна май çуракине кĕске срокрсенче, агротехника тĕлĕшĕнчен пысăк пахалăхпа туса ирттерессине организацилеме пултарчĕç.

Çакăнпа пĕрлех ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ Кувакино, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Чкаловски, Улатăр, Вăрмар тата Тăвай районĕсенчи колхозсем çуракинче тӳсме çук кая юлса пынине палăртрĕ.

Шăхасан, Советски, Первомайски, Калинино районĕсем, вĕсен пур условисем те пулнă пулин те, çуракине пысăк пахалăхпа туса ирттерме кирли çинчен партипе правительство кăтартнă лавнине пурнăçа кĕртмерĕç, ĕçĕн хисепĕ хыççăн хăваласа, агротехникăна киревсĕррĕн пăсса пычĕç. Хăшпĕр районсен руководителĕсем (Калинино, Первомайски, Советски, Етĕрне, Йĕпреç, Ишлей, т. ыт. те) çураки планне вăтамран тултарнипе лăпланса ларса, выльăх апачĕ валли акакан культурăсем, техникăллă культурăсем, çĕрулми акассине хакламарĕç, çак енĕпе государство планне пăсрĕç. Çавна пула пирĕн республика çĕрулмипе техникăллă культурăсем, выльăх апачĕ валли культурăсемпе тымар-çимĕçсем акмалли плана пурнăçлаймарĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕрпӳ, Етĕрне, Шупашкар МТС-ĕсен директорĕсем «МТС-сенчи тракторсемпе комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене уйхир ĕçĕсем валли хатĕрлесси çинчен» Союз Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление пурнăçа кĕртмерĕç. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене начар юсарĕç, тракторнăй бригадăсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине организацилемерĕç. Çавна пула тракторсем çĕмĕрĕлсе час-часах чарăнса тăчĕç, çав МТС-сем вара çураки планне пурнăçлаймарĕç.

Халь акă çĕртме тумалли хĕрӳллĕ вăхăт. Анчах пирĕн республикăри колхозсем июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне çĕртме тумалли плана пĕтĕмпе те 11,6 процент кăна пурнăçланă. Çĕртме тăвас ĕç уйрăмăнах Улатăр, Ишлей, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Вăрмар, Тăвай районĕсенче начар пырать.

Партипе правительство çине тăрса асăрхаттарнă пулин те, партипе советăн районри руководителĕсем тата çĕрĕç органĕсем нумайĕшĕсем вăйлă тырпул туса илес ĕçре калчасене пăхни мĕнле пысăк вырăн йышăннине ăнланса илмерĕç, сум сумлас тата ретсем хушшине кăпкалатас ĕçе паянхи кунччен те тивĕçлипе пуçарса ямарĕç. Ку ĕçе уйрăмах Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Первомайски тата Шăмăршă районĕсенче япăх организациленĕ.

Уйхирте тырпул куллен çитĕнсе пырать. Анчах республикăри колхозсемпе МТС-сем тырпулсене пухса кĕртме çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Комбайнсемпе молотилкăсене, тырă вырмалли машинăсене, транспортпа ытти инвентарьсене вăрахăн юсаççĕ, амбарсемпе витнĕ итемсене тата тырă типĕтмеллисене вăхăтра юсассишĕн е çĕнĕрен тăвассишĕн çине тăрса ĕçлемеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çак ситменлĕхсене халех пĕтерме хушса хăварчĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен хăйсен ларăвĕсенче, колхозсенче вара—колхозниксен пухăвĕсенче çураки итогĕсене тĕплĕн сӳтсе-явмалла, кашни колхоз çуракинче мĕнле ĕçленине пăхса тухса хакламалла, калчасене пăхас, çĕртме тăвас, тырпулсене пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес тĕлĕшпе татăклă мероприятисем палăртса хумалла.

Халĕ ĕнтĕ пĕр вăхăтрах нумай тĕрлĕ ĕçсем килсе тухаççĕ. Хĕрсех сум сумламалла, тырпулсене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешмелле, çĕртме сухи тумалла, утă çулма, тырă вырма хатĕрленмелле, машинăсемпе инвентарьсене юсамалла, силос хывмалла, пурне те вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ĕлкĕрмелле. Çавăнпа та кашни колхозрах тырпулсене пăхса çитĕнтерес тата вĕсене пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе çирĕп ĕç планĕсем тăвас пулать. Колхоз руководителĕсен нумай ĕçсем хушшинче çухалса каймалла мар, вĕсен пĕтĕм ĕçе фронтра пек çирĕп ертсе пымалла, колхоза лайăх сехет механизмĕ пек пикĕç те тĕрĕс ĕçлеттермелле.

Тырпулсене пăхса çитĕнтерес, вĕсене пухса кĕртсе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси партипе комсомол организацийĕсем колхозсене ертсе пырас тĕлĕшпе хăйсен вырăнне ӳстернинчен, вĕсем колхозсенчи ситменлĕхсене пĕтерме пултарнинчен, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче массăллă политикăллă ĕçе организацилеме тата вĕсене колхоз уйхирĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлемешкĕн мобилизацилеме пĕлнинчен килет.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ мĕнпур партипе комсомол организацийĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене социализмлă ăмăртăва татах та анлăрах сарса тырпулсене пăхса çитĕнтерессине большевикла организацилеме, уборкăна кăтартуллăн хатĕрленсе ситме чĕнчĕ. Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем çак чĕнĕве хапăлласах йышăнĕç, вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула вăхăтра пухса кĕртсе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăна тухассишĕн вăя хĕрхенмесĕр кĕрешĕç.

Республикăра заем сарас ĕç мĕнле пырать

Государствăн 1943 çулхи Иккĕмĕш Военнăй Заемне сарас тата укçине пухас ĕç малалла пулса пырать. Эрне хушшинче республикăра çĕнĕ заема 130.656.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 86.029.000 тенкĕ пухнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 34.450.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 81.232.000 тенкĕлĕх сарнă. Колхозсемпе артельсем 15.075.000 тенкĕлĕх сырăннă.

Çĕнĕ заема сарас тĕлĕшпе Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Вăрнар районĕсем малта пыраççĕ. Калинино районĕнче 5.135.000 тенкĕлĕх сарса, укçине те пĕтĕмпех пухнă. Шупашкар районĕнче 3.898.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине те пĕтĕмпех пухнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче 3.000.000 тенкĕлĕх сарса, паянхи куна укçине 2.556.000 тенкĕ пухнă. Вăрмар районĕнче 3.015.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине те пĕтĕмпех пухнă.

Çав вăхăтрах çĕнĕ заема сарас тата подписка укçине пухас тĕлĕшпе Йĕпреç, Етĕрне, Первомайски, Кувакино районĕсем юлса пыраççĕ. Ку районсенчи партипе совет организацийĕсем сырăннă заемăн укçине пухас енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Укерчĕк çинче—Шупашкарти пирпавăр фабрикинчи заем сырăннă ударниксем: **Е. Шумилина** (сулахайра ларать), унăн упăшки фронтра, хăй пилĕк ача амăшĕ, çĕнĕ заема 2 уйăхри ĕçукçи чухлĕ сырăннă; **З. Казанкова** (сылтăмра ларать), хисеплĕ грамотăпа наградăланă стахановка, çĕнĕ заема 2 уйăхри ĕçукçи чухлĕ сырăннă; **Д. Богдан** (хыçалта тăрать), кадрсен отделĕн начальникĕ, отечественнăй вăрçă инваличĕ, çĕнĕ заема 3½ уйăхри ĕçукçи чухлĕ сырăннă.

110.000 тенкĕлĕх сарнă

КАНАШ. Ачча ялсоветне кĕрекен «Хĕрлĕ Çар» колхоз членĕсем Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем кĕске митинг пулнă хыççăн çĕнĕ заема çырăнма тытăнчĕç. Колхоз председателĕ М. Малицкая юлташ хăй пример кăтартрĕ. Вăл 10 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине çавăнтах пачĕ. Ватă колхозник Кузьмин юлташ 2 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳлерĕ. Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ Зиновий Спиридонов юлташ 3 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине çав кунах парса татрĕ. «Хĕрлĕ Çар» колхоз членĕсем çĕнĕ заема пĕрикĕ сехет хушшинче 110.000 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Çак ялти тулли мар вăтам шкулти учительсем те заема уйăхри ĕçукçин 150—200 процентчĕ чухлĕ сырăнаççĕ. М. Иванов юлташ 1000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çавăнтах пачĕ. Шкул директорĕ Е. Андреев юлташ уйăхри ĕçукçин 150 процентчĕ чухлĕ çырăнчĕ. Иккĕмĕш Военнăй Заема сарас ĕç малалла та пысăк активлăхпа пырать.

Т. ТУРХАН.

1938 çулхи заемăн вылявĕ

Июнĕн 10-мĕшĕнче Мускавра Государствăн Шалти 1938 çулхи выигрышнăй заемĕн 30-мĕш выляве пулса иртнĕ. Выляврa 17.040 выигрыш, пĕтĕмпе 11.503.200 тенкĕлĕх пулнă. (ТАСС).

Пысăк парне илнĕ ятпа

Ĕнер Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра кашни цехсенчех Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш премине илнĕ ятпа митингсем пулса иртрĕç.

— Эпир май уйăхĕнче хамăрăн пултарулăха кăтартрăмăр. Пирĕн завод Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку пире татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Пире хакласçĕ пулсан, пирĕн ăна тысллă ĕçпе ответлес пулать, —тет пĕр цехăн начальникĕ Федченко юлташ хăй çине татăклă обязательствăсем илсе.

Слесарь-стахановец Дмитриенко юлташ:—Паян пирĕншĕн савăнăçлă кун. Çавăн пек пысăк наградăна пирĕн умма татах та пысăк задачăсем кăларса тăратать. Эпĕ май уйăхĕнче куллен нормăна 200—300 процент тултарса пынă пулсан июнь уйăхĕнче тата тухăçлăрах ĕçлеме пулатăп,—тесе сăмах парать.

Митингра тухса калаçакан рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникăла работниксем кашнийех хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Стахановец-слесарь Клипо юлташ куллен заданне 300 процент пурнăçлама пулчĕ.

Кашни цехрах рабочисемпе работницăсем июнь уйăхĕнче татах та тухăçлăрах ĕçлеме, тăван çĕршыва фронт заказĕсене вăхăтра пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулчĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Инвалидсен кооператив артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ инвалидсен кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ, Канашри «Красный воин», Чакакарти (Ишлей районĕ) «Красный стрелок» артельсем ăмăртура мала тухнă тесе йышăнчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрринчи инвалидсен «Социализм» артелĕнчен илсе «Красный воин» артеле (правлени председателĕ Корчагин, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов) памалла тунă, социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа пама йышăннă. Çак укçаран 1.000 тенкине парса Канаш горсовет исполкомĕн председательне Белоусов юлташа премилемелле тунă.

Чакакарти «Красный стрелок» (Ишлей районĕ) артель (правлени председателĕ Атаманов, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов) май уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 137,7 процент, куллен кирлĕ таварсем е... 167,7 процент пурнăçланă. Социал... лă ăмăртура палăрнă работник... премилеме артеле 3.000 тенкĕ ... пама йышăннă.

Совнарком май уйăхĕнче çак арт... сем лайăх ĕçленине палăртрĕ: Улатă... «Союз инвалидов» артель, Сĕнтĕр... ринчи «Социализм» артель, Шупаш... ...бторгин» артель, Сиккасс... «XVIII партконференци» артель, ... мĕрлери «Партизан» артель т. ыт. ...

Çавăн пекех Совнарком Вăр... Йĕпреç, Пăрачкав, Первомайски, ... тĕр тата Кукеçри инвалидсен коопе... ри артелĕсем май уйăхĕнче начар ... ленине палăртрĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ артель... пур членĕсене те Мускаври пр... кооперации работникĕсем чĕнсе калан... не пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе социализ... лă ăмăртăва анлăн сарса, çур... планне срокчен пурнăçлама чĕнчĕ.

Промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла кооперацийĕн артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Канаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан артель (Чăвашдревпромсоюз системине кĕрет), Канашри «Авангард» артель (Чăвашпромсоюз системине кĕрет). Октябрьски районри Караньялĕнчи «Труд» артель» (Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрет) тата Етĕрне районĕнчи Пушанарти Чкалов ячĕпе тăракан артель (Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрет) çĕнтерне тесе йышăннă.

Сталин ячĕпе тăракан артель май уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 229 процент, ширпотреб енĕпе 350 процент пурнăçланă. Апрель уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 11 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Сталин ячĕпе тăракан артель аллинчех (председателĕ Баранов юлташ) хăвармалла тунă тата социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Караньялĕнчи «Труд» артеле (правлени председателĕ **Моисеев**) плана пĕтĕм продукци енĕпе 135,8 процент, ширпотреб енĕпе 156,5 процент пурнăçланăскере, 5.000 тенкĕ, Канашри «Авангард» артеле (правлени председателĕ **Васильев** юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ **Алексеева** юлташ), плана пĕтĕм продукци енĕпе 103,8 процент, ширпотреб енĕпе 151,2 процент пурнăçланăскере, 5.000 тенкĕ, Пошанарти Чкалов ячĕпе тăракан артеле (правлени председателĕ **Алексеева** юлташ), плана пĕтĕм продукци енĕпе 256,8 процент, ширпотреб енĕпе 200 процент ытла пурнăçланăскере, 3000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Совнарком тата 1943 çулхи май уйăхĕнче çак артельсем лайăх ĕçленине палăртнă: Улатăр хулинчи «Красная Звезда», «8 марта» тата «Красная швея» артельсем; Куславкка районĕнчи Киров ячĕпе тăракан тата «Прогресс» артельсем; Первомайски районри Мăн Шăхалĕнчи, Липовкăри, Кив Эйпеçри артельсем; Сĕнтĕр районĕнчи «Тĕрлекен», «20 лет Чувашии», «Волга», «Дружба» тата Шетмĕпуçĕнчи артельсем; Çĕмĕрле районĕнчи Ширпотреб ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь» тата Улхашри артельсем; Етĕрне районĕнчи «1-ое мая», Перво-Чебаковăри артельсем; Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпари тата Ямачурелĕнчи артельсем; Тăвай районĕнчи «8 марта», Буяновăри тата Тăрмăшри артельсем; Ишлей районĕнчи «18 партсъезд» тата Мамăшри артельсем; Элĕк районĕнчи «Коммунар» артель; Красноармейски районри Карайри артель; Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Стахановец» тата Хăваткассинчи артельсем; Шупашкар районĕнчи «Правда», Лапсарти, Çĕньял Ойкассинчи, Чăрăшпуçĕнчи, Шуркассинчи артельсем; Шупашкар хулинчи «Вышивка», Шахтура, «Пекарь» «Кожупряжь» артелĕсем.

Кунсăр пуçне, Совнарком Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Красноармейски, Чкаловски тата Шăмăршă райсовет исполкомĕсем промысла артелĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине, вăхăтра пулăшу парса тăманнине, çавна пула çав районсенчи нумай артельсем правительство заданине уйăхсерен пурнăçласа пыманнине палăртнă. Çавăн пекех тата Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новинскри артель (правлени председателĕ Ермаков юлташ) кашни уйăхрах правительство заданине пурнăçласа пыманнине палăртнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 10-мĕшĕнче фронтра пăллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 9-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинăран кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 7 складне сирпĕнтерсе янă, 3 артиллери батарейине пусарнă, тăшманăн торпеда катерне тата хуралта çӳрекен 2 катерне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕç пехотине пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 6 пулеметне çĕмĕрнĕ, 2 артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра пирĕн подразделенисем, артиллерипе минометсенчен персе пулăшса тăнипе, нимĕç позицийĕсене çапăçса разведка тунă, тăшманăн 50 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, темиçе çынна тыткăна илнĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче 8 нимĕç истребительне персе ӳкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре тăшманăн пĕр полк таран пехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăланă. Малтан гитлеровецсем пирĕн малти подразделенисене кăштах каялла чакарнă. Унтан пирĕн боецсем хирĕç пырса çапнă та нимĕçсене каялла хăваласа янă. Çапăçура тăшманăн 300 салтакпа офицер таран вилнĕ. Унăн 5 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пĕр чаçăн летчик-истребителĕсем тăшман самолетне совет территорийĕ çине антарса ларнă. Нимĕç летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Севск районĕнче пирĕн разведка тăшман оборонин малти хĕррийĕнче нимĕç офицерĕсен ушкăнне асăрханă. Пĕр чаçăн артиллерисчĕсем, темиçе хут тĕрĕссĕн персе ярса, çав офицерсен ушкăнне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 2 нимĕç танкне персе çĕмĕрнĕ тата нимĕç пехотине 2 рота таран сапаласа янă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Артиллерипе минометсенчен персе, 14 дзота, 10 пулемет точкине тата 8 блиндажпа землянкăна ишĕлтернĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн 17 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Карели фронтĕнче пĕр участокра тăшман пехотин виçĕ группи пирĕн пĕр чаçăн позицийĕсене атакăланă. Пирĕн подразделенисем контратака тунă та тăшман пехотине хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕç колоннине тапăннă та 47 гитлеровеца вĕлернĕ. Партизансем 3 станковăй пулемет, 39 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ. «Смерть фашизму» ятлă отрядри партизансем 2 нимĕç танкне сунтарса янă тата 70 гитлеровеца вĕлернĕ. «Красная знамя» ятлă отряд пĕр кун хушшинче нимĕçсен 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 47 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктра партизансем гитлеровецсем Германие яма хатĕрлесе хунă утăпа тырпăн 12 складне сунтарса янă.

* * *

Резерври 102-мĕш батальонран партизансен енне куçнă нимĕç салтакĕ Курт В. çапла каласа панă: «Резерври батальон тылра тăнă, вăл çапăçусенче пулман. Ана ватă салтаксене пухса йĕркеленĕ, çав салтаксене вăрçă тахçанах йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ. Салтаксем вăрçă тăсăлсан пирĕн батальона та малти позицисене ярĕç тесе хăраççĕ. Султалăк каялла эпир Германия çĕнтеретех тесе хытă ĕненеттĕмĕр. Халĕ çавна никам та ĕненмест ĕнтĕ. Нумай шухăшланă хыççăн эп вырăссен енне куçма шут тытрăм. Фронт линине çитме инçетчĕ. Çав çул мана хăрушă пек туйăнчĕ. Эпĕ вара партизансем патне кайрăм та вĕсене тыткăна парăнтăм. Эпĕ партизансемпе пĕрле виçĕ эрне çӳресе, çав районра партизансем хуçа пулса тăнине пĕлсе çитрĕм. Партизансем мана часах вара советсен çар штабĕн чаçне ăсатрĕç.

Июнĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче нимĕнле пăллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçăн разведка тăвакан отрячĕ çĕрле тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем 70 гитлеровеца вĕлернĕ, 2 дзота тата 5 блиндажа сирпĕнтернĕ. 3 пулемет тытса илсе тата темиçе çынна тыткăна илсе, разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Лисичанск районĕнче тăшманăн пĕр роти тата темиçе танкĕ пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Артиллеристрен тата пехота хĕçпăшалĕнчен персе, гитлеровецсене сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен пĕр танкне персе çĕмĕрнĕ.

Совет бомбардировщикĕсем çĕрле тăшманăн чугунçул эшелонĕсене тата склачĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахнине пула нумай тĕлте пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Севск районĕнче пĕр чаçăн артиллерисчĕсем, чугунçул станцине тапăнса, боеприпассем тиенĕ нимĕç эшелонне сирпĕнтернĕ. Тепĕр участокра, артиллерирен персе, тăшман автоколоннине сапаласа янă. Грузсем турттарса пыракан 6 автомашинăпа аркатса тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пĕр чаçăн снайперĕсем пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Красноармеец Сухенко, сержант Южачин юлташсем кашниех 15-шер гитлеровеца вĕлернĕ, снайпер Чингаев юлташ 35 нимĕçе, снайпер Меньшиков юлташ 33 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Житомир облаçĕнчи партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе çапăçнă. Партизансем тăшманăн 48 салтакне вĕлернĕ, пĕр бронемашина, 2 станковăй пулемет тата прицеплă грузовика пĕтерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансен группи нимĕçсен моторлă 2 лодкине путарнă, 12 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен вĕлернĕ обер-ефрейторĕ çумĕнче Оснабрюкри шăратакан тата машинăсем тăвакан завод хуçи Карл Вейман янă çырăва тупнă. Вăл çырура çапла калана: «.. Оснабрюка сывлăшран питĕ вăйлăн килсе тапăнчĕç. Фугаслă бомба пирĕн çурта пĕтĕмпех аркатса тăкрĕ. Часах Оснабрюка тепĕр хут, анчах тата вăйлăрах тапăнчĕç. Ку хутра вара завод машина отделенийĕсĕр, модельнăйсăр, шăратакан цехсăр, конторăпа мастерской хушшинчи складсăр тата тепĕр икĕ складсăр тăрса юлчĕ. Çакăн хыççăн Оснабрюка нумай хутчен сывлăшран килле-килле тапăнчĕç. Кашни хутрах фирмăна пысăк сиен кӳчĕç. Бомбăсем пăрахнине пула халăх питĕ вăйлă хумханать».

* * *

Норвеги патриочĕсем нимĕç пусмăрçисемпе паттăррăн кĕрешеççĕ. Ставангер сывăхĕнче хĕçпăшаллă норвежецсен группи радиостанцие сирпĕтнĕ. Нимĕç хуралне тата станцире ĕçлекен çынсене — пурĕ 18 çынна—пĕтерсе тăкнă. Осло районĕнче патриотсем нимĕç войскине турттарса пыракан чугунçул эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Нумай гитлеровеца вĕлернĕ тата амантнă. Берген сывăхĕнче нимĕçсен çар склачĕсене сунтарса янă.

Республика уйхирĕсенче

Кушарти колхозран пример илмелле

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 11-мĕшĕ (Хамăр корр.). Кушарти Буденный ячĕпе тăракан колхозăн кăçал план тăрăх 96 гектар çине кĕрхи тырăсем хăвармалла. Тухăçлă тырпул тупассишĕн пысăк хастарлăхпа кĕрешсе ĕç кунта. Кĕрхи тырăсем акмалли çĕрте халь 2.000 лав тислĕк кăларчĕç. Тислĕк саппаласа хурса, çĕре çийĕнчех сапаласа пычĕç. Паянхи куна колхоз пĕр гектар çинче ирхи çĕртме турĕ. Çавăнпа вăл ирхи çĕртме тумалли плана ирттерсе тултарчĕ. Çак ĕçре колхоз лашисемпе туллин усă курчĕ. Колхозниксем сухара, сурахинчи пекех, куллен тухăçлăн ĕçлесе пычĕç. Ирхи çĕртмене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса хăварма колхоза МТС-ри трактор бригади те нумай пулăшрĕ. Тракторсем пурĕ 50 гектар сухаларĕç.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз тыхи пур ĕçсене те кая хăвармасăр, вăхăтрах туса пырать. Çакă вăл колхоз правленийĕ çавăрăнăçуллăн ĕçлеме пĕлнинчен нумай килет. Ĕç вăйĕ кунта тĕплĕн усă курма пĕлеççĕ.

Акă июнĕн 8-мĕшĕнче колхозра тислĕк тăкнă çĕрте 38 çын, çум çумланă çĕрте 22 çын, кăшман лартнă çĕрте сын, табак лартнă çĕрте 30 çын ĕçлерĕç.

Пĕр кун хушшинче, çапла вара, колхоз производствинче çакăн чухлĕ ĕç туни курăнчĕ: 400 лав тислĕк кăларнă, 7 гектар çинчи тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатнă, 1,25 гектар çинче кăшман, 0,30 гектар çине табак лартнă. Кашни колхозник хастарлăн ĕçлет.

Ĕç вăйĕ кунта ытти колхозсенчинчен ытла нумай мар. Анчах колхоз руководителĕсем, хăйсем куллен тимлĕн ĕçлесе, колхозри пашни çыннах ĕçе явăçтараççĕ. Акă, тислĕк кăларнă çĕрте ĕçлекенсем кунне икшер норма тултараççĕ. Камсем вĕсем? — Шкулта вĕренекен ачасем. С. Степанъ (8-мĕш класра вĕренекенскер) уя кунне 37 лав тислĕк кăларать, А. Семенова 35 лав, А. Андреев (6-мĕш класра вĕренет) 37 лав, В. Пантелеймонов 33 лав тислĕк турттарать.

Колхозниксем ĕçе ир ирех тытăнса каçхине 8 сехетчен ĕçлеççĕ. Сакăн хыççăн апатланаççĕ те каллех ĕçе тухаççĕ: пахча-çимĕçсене шăвараççĕ, ыран ĕçе тухма хатĕрленеççĕ. Колхоз правленийĕ паян тума хушнă ĕçсене вĕсем паянах пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Кашни çын кунта ыран унăн каллех ĕçре пулмаллине пĕлсе тăрать. Çавăнпа кунта хăйсен ирĕкĕпе, правленине пĕлтермесĕр, аякка тухса çӳремеççĕ. Колхозра пур ĕçсем те вăхăтра пулса пыраççĕ. Тислĕк кăларас, ирхи çĕртме тăвас ĕçсене вĕçленĕ те ĕнтĕ. Утă çулма тухма хатĕрленсе çитнĕ, йĕтемсене хырса тасатаççĕ, амбарсене çĕнĕ тырă кĕртме тĕплĕн юсаса дезинфекцилеççĕ, çуса тасатса уçăлтараççĕ.

Анчах та районра нумай колхозсенче ĕçсем Буденный колхозри пек мар, юлса пыраççĕ. Уйрăмăнах çум çумлас ĕç юлса пырать. Чылай уйсенче çумкурăкĕсем тырăсене пусса илме пуçланă. Ирхи çĕртмене те халĕ 500 гектар çеç тунă, вăл шутран 250 гектарне тракторсемпе сухаланă, лашапа сахал сухаланă. Колхоз правленийĕсен халĕ çивĕчрех, тимлĕнрех ĕçлемелле.

С. ШАДИН.

Çум çумлас ĕçе васкатмалла

КУЖЕÇ. Малта пыракан колхозсем çуракин ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Çĕртме пуссине тислĕк кăларас ĕçе çавăн пек колхозсенче ик-виçĕ кун хушшинчех вĕçлерĕç. Халĕ ирхи çĕртме сухине туса пĕтерсе пыраççĕ ĕнтĕ. Ильбеш ялсоветĕнчи «Красный конь» колхоз, акă, ирхи çĕртме сухине туса пĕтерчĕ. Ишкассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз ыран-паянах ирхи çĕртме туса пĕтерет. Нарядсене кайман лашасемпе пурнипе те çĕртме тăваççĕ. Кунсăр пуçне, МТС тракторĕ те куллен лайăх ĕçлет.

Районра тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕç халĕ те çителĕклĕ сарăлман-ха. Паянхи куна мĕнпурĕ те икĕ пин гектара яхăн çеç çумкурăкĕсенчен пĕрремĕш хут тасатса тухнă. Хăшпĕр колхоз правленийĕсем çуракин ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн ĕлĕкхи йăлапа «каму» вăхăчĕ турĕç. «Ĕлкĕрĕпĕр-ха», тесе, чĕретре тăракан ытти ĕçсене тума çийĕнчех тытăнмарĕç. Шĕнерпуç ялсоветĕнчи «11 лет Октября» колхоз тата Карачура ялсоветĕнчи колхозсем çум çумлама халĕ те тытăнман-ха.

Н. БОГОРОДСКИЙ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Острецово колхозникĕсен примерĕпе

ИШЛЕЙ. Иваново облаçĕнчи Острецово ялĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен примерне йышăнса, пирĕн районри колхозсемпе колхозниксем ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене тăванла пулăшу пама шефа илеççĕ. Сыбайкассинчи «Клевер» колхоз членĕсем нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă пĕр колхоз валли планран ирттерсе 5 сысна çури, 3 путек, 20 чăх ӳстерсе пама йышăнчĕç.

Çавăн пекех А. А. Андреев юлташ ячĕпе тăракан, «Комбайн», Папанин ячĕпе тăракан колхозсенче те нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозсене тăванла пулăшу парса тăма йышăнчĕç. Андреев юлташ ячĕпе тăракан колхоз хăй шефа илнĕ колхоз валли 8 сурăх, 8 сысна çури, Папанин ячĕпе тăракан колхоз 3 сурăх, 5 сысна çури, 2 хур ӳстерсе параççĕ. «Комбайн» колхоз шефа илнĕ колхоз валли 3 сысна, 3 путек ӳстерсе пама йышăнчĕ. Çакăн валлиех М. Столяров колхозник хăйĕн хуçалăхĕнчен пĕр сурăх пама пулчĕ.

Б. ГУСЬКОВ.

Çур çулхи плана срокчен тултарма пулчĕç

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине районри предприятисем çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлеççĕ.

«Большевик» завод коллективĕ çуллăх приказне сӳтсе явнă хыççăн хăй çине май тата июнь уйăхĕсенче планран ирттерсе 5 процент продукци туса кăларма, ĕç тухăçлăхне плана ирттиччен 25 процент хăпартма, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чакарма, чĕртавара 3 процент перекетлеме, 80 пин тенкĕлĕх рационализацилĕ сĕнӳсем пухма тата çĕнĕрен 30 çынна вĕрентсе хатĕрлеме обязательствăсем илнĕ.

Обязательствăсене пурнăçлас тесе, рабочисем хушшинче ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Механически цехра нормăна тултарса пырайманнисем пачах çук, уйрăм рабочисем Закалкин, Моторин, Романов, Кощеев тата ытти те куллен нормăсене 2 хут ирттерсе тулаççĕ.

Комбинат коллективĕ, апрель уйăхĕнче график тăрăх ĕçленĕскер, çур çулхи плана срокчен тултарас çĕнĕ хĕрӳллĕ тухрĕ. Стахановец Ардонин юлташ çуллăх приказне ответлесе куллен 4-шер норма туса ыйма пулнă. Çакна вăл пĕр заказа пурнăçласа, сменăри норма 820 процент тултарчĕ. Унăн мĕслечĕпе ĕçлесе, халь вунпаир рабочисем ĕç тухăçлăхне 3—4 хут ӳстерчĕç. Самахран: Посадин, Федоров, Щеглов юлташсем вăтамран 4-шер норма туса ĕçлеççĕ.

Юлашки уйăхсенче райпромкомбинат лайăх результатсем кăтартса пырать. Вăл апрель уйăхĕнчи итогсем тăрăх Чăваш АССР Совнаркомĕн премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Сталин юлташ приказне ответлесе, комбинат коллективĕ çур çулхи программăна 15 кун малтан, июнĕн 15-мĕш тĕлне, тултарма обязательство илчĕ.

Х. Лисин.

Шкул ачисен çуллахи канăвне лайăх организацилер. Вĕренекенсене уйхир ĕçĕсене активлăн явăçтарар!

Вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

Пирĕн хăçанхи вĕренӳ çулĕнче пысăк ĕçсем тăвас тĕллев пулчĕ. Пĕррĕмĕш сурсулта 3 сменăпа ĕçлерĕмĕр. Кăçхине те шкула вĕренме килекен учительсем çителĕксĕр пулчĕç. Апла пулин те эпир 1942—43-мĕш вĕренӳ çулне ирттерĕмĕр, тĕрĕслев лайăх ирттĕмĕр. Пирĕн учительсем вĕренекенсен умри çыннисене лайăх пĕлӳ парасшăн тăрăшрĕç.

Шкул çурхи тĕрĕслевсене пĕлӳ тĕрĕслевне пур ачасене те тĕплĕн хатĕрлеме тăрăшрĕ. Çавна туса тĕрĕслевсене организацилĕ ирттерĕç. Вĕренекенсем

Ункрчек сиинче: 1-мĕш номерлĕ шкулăн 10-мĕш класĕнче пĕлӳ тĕрĕслевĕ пырать. Отличница Людмила Заблоцкая физикăпа зачет парать.

çар предмечĕпе «отлично» тата «хорошо» пĕлӳ илчĕç, вырăс чĕлхипе, литературипе, географипе, математикăпа тата ытти предметсемпе те çирĕп пĕлӳ илнĕ

Пĕррĕмĕш «А» класра вĕренекенсем (класс руководителĕ Х. Железнова юлташ) 100 процентпа вĕренӳре ĕлкĕрсе пычĕç, хăшĕмĕн класа куçрĕç. Çакăн пекех 5-мĕш «А», 6-мĕш «А», 8-мĕш тата 9-мĕш классене вĕренекенсем те пурте ĕлкĕрсе пычĕç. Класс руководителĕсем Е. Ухватова, С. Матвеева, Е. Телешова, Г. Винокурова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Вĕренекенсем вĕренӳ ĕçне общественлă ĕçпе çыхăнтарса пычĕç. Пирĕн хăçхи вĕренекенсем пуçне фронта тĕрлĕ япаласем пухса ячĕç. Самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрилье тума укçа-тенкĕ пухрĕç, фронтовиксене çамăл парнесем ячĕç, сусăрсем ячĕç, госпитальсене сывлакансем хушшинче ĕçлерĕç. Тимуровецсем фронтовиксен семьисене тĕплĕнех пулăшса тăчĕç. Вĕсем фронтовиксен 5 семьине вутă пиçсе-çурса пачĕç, çамăлăх ачасене пăхрĕç. Воскресникăсене пуçтарăннисен ĕçлесе пушнă мĕнпур ухçана оборона фондне ыйтрĕç.

Июнĕн 7-мĕшĕнче 7—9-мĕш классене вĕренекенсен вĕренӳ пулнă. 7-мĕш классенче вĕренсе тухнă отличниксене отличникăсене похвальнăй грамотăсем парăпăр.

Вĕренекенсем халĕ ямсăр курайĕсен пухсе тĕлпине пусланчĕ социалисла ăйăртăва хутшăнчĕç. Кунсăр пуçне шкул участокĕнче, колхозсен уйĕсенче, шкул валли вутă хатĕрлес ĕçре пулма хăйсен буллусеннĕ хăйĕнсем. Шкул директорĕ, комсомола ытти организацийĕсем шкул ачисен çуллахи канăвне лайăх организацилессишĕн кĕрешеççĕ.

Шкул халĕ хĕрсех çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленет.

В. СЕРГЕЕВА,
Шупашкар хулинчи 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн директорĕ.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене вăйлăн пырса çапни

Июнĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем тăшманăн 5 аэродромне вăйлăн пырса çапнă.

Бомбăсем пăрахса тăшманăн нумай самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Бомбăсем пăрахнă пур аэродромсем çинче те пушарсем нумай тухнă тата боеприпассемпе горючи склачĕсем сирпĕнсе-сирпĕнсе кайнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Нимĕç самолечĕсем Ярославле тапăнни

Июнĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ Ярославле тапăнма хăтланнă. Пӳлсе тăракан вут хĕм урлă хула çине тăшманăн темиçе самолечĕ вĕçсе кайнă та вут тивертекен тата фугаслă бомбăсем тĕлли-паллисĕр пăрахнă. Халăх пурăнакан çуртсене тивнипе тухнă пушарсене часах сӳнтернĕ. Граждансен халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Тапăнăва сирсе янă чухне сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери пеннипе 6 нимĕç бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июнĕн 9-мĕшĕнче Çурçĕр-Хĕвеланăç Африкăри сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем Пантеллери утравне пыра-пыра тапăннă.

Июнĕн 9-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Джербили тата Катани аэродромĕсене (Сицили утравĕ) атакăланă.

Алжирти радио çапла пĕлтернĕ: июнĕн 8-мĕшĕнче Англин тинĕс-çар вăйĕсем Пантеллери утравне тапăннă чух утрав çине 2 пин снаряд кăларса янă.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви калана тăрăх Аргентина правительстви ĕнер çапла пĕлтернĕ: правительство июнĕн 7-мĕшĕнче халăха пĕлтернĕ деклараци Аргентинăн хальхи вăрçă тĕлĕшпе тытса тăракан позицине çителĕклех сутатса парать. Анчах та, тенĕ правительство заявленийĕнче, çакна хушса каламалла: «Аргентина сăмахпа кăна мар, ĕçре те Америкăри тăванла нацисемпе пĕрлешсе пырас политикăна тытса пырĕ».

«Ц. М.» хаçатăн корреспонденчĕ Монтевидеоран çапла пĕлтерет: Аргентинăри фашистсем майлă çырса тăракан хаçатсем, сăмахран каласан, «Эль памперо» тата фашистсем майлă тăракан ушкăнсем Аргентинăри çĕнĕ правительствăна хавасланса пулăшса тăраççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, Рамирес кабинетне пĕрлешӳллĕ нацисем майлă кĕретĕнех ĕçлесе тăракан пĕр деятель те кĕмен, çав вăхăтрах кабинетран тĕнĕл держависем майлă ĕçлесе тăнă деятельсене чылайăшне кăларнă. Чылай паллăсем çакна кăтартса параççĕ: Аргентинăри восстание власа хăйсен аллине çавăрса илес шутпа кăна тунă, çĕнĕ правительство Кастильо правительствинчен нимĕнпех те уйрăлса тăрас çук. Кабинет составĕнчи улшăнусене, тĕнĕл держависемпе ытла та тачча çыхăнса тăнă çынсене кăларса, США правительствинчен тата ытти çĕршывсен правительствисенчен те ырă ят илтес шутпа кăна тунă.

ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕМ ОТРАВЛЯЮЩИ ВЕЩЕСТВОСЕМ ЯРАС ПУЛСАН ВĔСЕНЕ ХИРĔÇ США МĔН ТĂВАССИ ÇИНЧЕН РУЗВЕЛЬТ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт пресс-конференцире çакăн пек заявлени тунă:

«Çак вăрçă пуçланнăранпах вăхăчĕ-вăхăчĕпе тĕнĕл держависен пĕр-пĕр государстви е темиçе государстви отравляющи веществосемпе наркăмăшлă газсем яма хатĕрленеççĕ е вăрçăра урăх сĕмсĕр майсемпе усă курма хатĕрленеççĕ, текен хыпарсем сарăлаççĕ. Пĕр-пĕр çĕршыв, пирĕн хальхи тăшмансемех те, этемлĕхе хирĕç çавăн пек сĕмсĕр хĕçпăшалпа усă курма хатĕрленет е усă курма шутлать тесе шухăшласан, йĕрĕнес килет. Анчах та тĕнĕл держависем çапла хăтланма хатĕрленнине çирĕплетсе паракан паллăсем тăнахах та пур. Çакă хытă асăрхаттарать: çавăн çинчен пĕлтерекен хыпарсем юлашки вăхăтра час та часах тĕрлĕ тĕлтен килме пуçларĕç. Çав йышши хĕçпăшалпа усă курни законлă мар, тесе пĕтĕм цивилизациллĕ этемлĕх пĕр шухăшлă пулса йышăннă. США ун пек хĕçпăшалпа нихăçан та усă курман тата малашне те пирĕн унпа нихăçан та усă курмалла пулмĕ, тесе шанатăп эпĕ. Çакна пĕлтерсе эпĕ çапла çирĕппĕн калатăп: эпĕ пирĕн тăшмансем малтан хăйсем çав йышши хĕçпăшалпа усă курма тытăничченех эпир нимĕнле условисенче те унпа усă курма шутламастпăр.

США президенчĕ тата Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулса, эпĕ пирĕн тăшмансене çавăн пек варварла методсемпе усă курма шутлакан тăшмана кирек хăшне те, çакна пĕтех те çирĕппĕн каласа хурасшăн: пĕрлешӳллĕ нацисенчен кирек хăшне те пулин çавăн пек хĕçпăшалпа тапăнсан, эпир ăна США-на хăйне тапăнни вырăнне хуратпăр, вара çак сăмахсенчен мĕн тухса тăрать, çавăн пек вăрçма пуçлатпăр. Эпир халех каласа хуратпăр: кам çав преступленисене туса айăпа кĕрет, çавна хирĕç çав мерăсене пĕтĕмпех тата хăвăрт пурнăçа кĕртме пулатпăр. Эпĕ хама хам тĕнĕл держависен Европăри тата Азири çарĕсемпе халăхĕсене çакăн çинчен систерсе пĕлтерме тивĕçлĕ тесе шутлатăп: этемлĕх чăтма пултарайман çавăн пек кирек-хăш сĕмсĕр майсемпе камсем усă курма пуçлĕç, çав мелсен мĕнпур хăрушлăхĕпе тискерлĕхĕ вĕсене хăйсене пуçĕсенчен хаяррăн пырса çапĕç. Çавăнпа та, тĕнĕл держависем хăшĕ те пулин отравляющи веществосемпе усă курма пуçласанах, эпир çавăнтах çав çĕршыва хирĕç çав мелсемпе тата туллирех усă курса, çав çĕршывăн вăрçă промышленность центрĕсене, тинĕс порчĕсене тата ытти çар объекчĕсене те çав çĕршывăн пĕтĕм территорийĕпех сĕмĕрсе тухăпăр».

Ирĕклĕхе юратакан халăхсем фашистла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре

1942—43 çулхи кĕркуннехипе хĕллехи кампани вăрçă ĕçĕсене улăштарчĕ, вăрçă ĕçĕсем Англи, Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕпе демократиллĕ ытти çĕршывсемшĕн ăнăçлă пулса пыра пуçларĕç. Сталинград патĕнче нимĕçсем чи йывăр поражени тӳсрĕç. Çавăн хыççăн Хĕрлĕ Çар тунă наступлени тăшман войскисен 1942 çулла тунă тактикăллă çитĕнӳсене пĕтĕмпех пĕтерсе хучĕ. Тăшман войскисен питĕ пысăк территорирен туха хăймалла пулчĕ, вĕсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсрĕç.

Совет войскисен ăнăçлăхĕсем пирĕн союзниксене хатĕрленме тата вăрçă пыракан ытти вырăнсенче хăйсен активлăхне ӳстерме май пачĕç. Вĕсен авиацийĕ Италипе Германин вăрçăла промышленность центрĕсене çав тери вăйлăн пыра-пыра çапать. Тăшмана Çурçĕр Африкăран хăваласа кăларса, вĕсем тĕнĕл держависене питĕ чаплăн çĕнтерчĕç. Тăшмана Хĕвелтухăçĕнчен Хĕрлĕ Çар пырса çапни тата Хĕвеланăçĕнчен пирĕн союзниксен войскисем пырса çапни вăрçă пуçланнăранпа пĕррремĕш хут пĕрлешсе пырса çапни пулса тăчĕ. Гитлерла çар машини, 1943 çулхи майăн 1-мĕшĕнчи приказра Сталин юлташ палăртнă пек, никĕсе çитиччен кисренет. Фашистла Германие çĕнтерме тивĕçлĕ майсем туса хунă.

Союзниксен войскисем континент çине пырса кĕресрен хăраса ӳкнĕ гитлерла шайка халĕ Европа тăрăх чукса çӳрет, васкаса укрепленисем тума хăтланать. Хăйсен йывăр лару-тăрăвне нимĕçсем «тотальнăй» мобилизаци тăвас тенипе хупласа лартма хатĕрленеççĕ. «Анчах нимĕнле шав та фашистсен лагерĕ пысăк йывăрлăх тӳссе ирттернине пытарса лартма пултараймасть» (Сталин).

Халь сарăлса пыракан событисене пула, оккупациленĕ Европăн çĕршывĕсенче гитлерла Германие хирĕç тăрасси вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Активлă кĕрешĕве çĕнĕрен çĕнĕ халăх массисем хутшăнаççĕ. Хăйсене пусмăрлакансене хирĕç вĕсем татăклăрах кĕрешме тытăнаççĕ. Çĕршер пин патриотсем ĕнтĕ, алла хĕçпăшал тытса, нимĕçсемпе итальянецсене хирĕç çапăçаççĕ. Кашни кунах Югославире, Францире, Грецире, Бельгире, оккупациленĕ ытти çĕршывсенче те халăх тавăрнине пула гитлерла салтаксем, офицерсем, гестаповецсем пĕтеççĕ.

Çынсене тотальнăй мобилизацирен хӳтĕлемелли чи паха меслет, нацин ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕн чи ăнăçлă форми—партизанла движени пулса тăрать. Оккупациленĕ Европа халăхĕсем çав çул çине ытларах та ытларах тухса тăраççĕ.

Нимĕçсемпе итальянец захватчикĕсене хирĕç Югославире партизансен халăх çарĕ геройла çапăçать. 1942 çул вĕçне Югослави партизанĕсем пысăк ăнăçлăхсем турĕç. Вĕсем 48 пин квадратлă километр талкăш территорие, çавринчен ытла Боснире тата Босански Краинăра, ирĕке кăларчĕç, çав вăхăтрах партизансем çĕршывăн ытти пайĕсенче те — Хорватире, Далмацире, Словенире—вăйлă наступлени туса пычĕç. Хăюллă партизансем нимĕçсемпе итальянецсен пиншер салтакĕсене пĕтерсе тăкнă. Вĕсен ăнăçлăхĕсем тата вĕсем оккупациленĕ ытти çĕршывсене хăйсем майлă ытларах çавăрни Италипе Германин оккупантĕсене питĕ шиклентерет. Оккупантсем хăйсен умне Югославири наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан движение пăвса хурас, партизанла çарăн çыннисене пĕтерсе пăрахас задача лартнă. Çав шутпа вĕсем пысăк вăйсем, вăл шутра авиаци, танксем, артиллери, мобилизациленĕ. 1943 çулхи март уйăхĕ пуçланнă тĕле партизансем йышăннă территори çинче нимĕçсен 7 дивизийĕ, итальянецсен 6 дивизийĕ тата Павелича ытти сутăнчăксен войскисем—пурте 100 пин çынна яхăн — кĕрешнĕ.

Апла пулин те партизансем наступленилле пысăк операцисем чылай туса ирттерчĕç. Талăклăн штурмланă хыççăн вĕсем Прозор хулине йышăннă, унта нумай трофейăсем тытса илнĕ. Мостар—Прозор—Конщ секторĕнче итальянецсен «Мурге» дивизине пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Вилнисене кăна шутласан та, тăшманăн 2 пин салтак тата 45 офицер пĕтнĕ, 1.200 салтакпа 25 офицер тыткăна лекнĕ. Кунта çавăн пекех нимĕçсемпе Павелич отрядĕнчи усташасене 350 çынна вĕлернĕ. Вăл районта васкаса каяллла чакнă чухне оккупантсем партизансен аллине нумай хĕçпăшал хăварнă: юсавлă 17 танк, 16 оруди, 230 пулемет, 2 миллион патрон тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем те пăрахса хăварнă.

Югославире çапăçусем хĕрсе пыраççĕ. Юлашки вăхăтра сахал вăйсемпе тата çителĕксĕр хĕçпăшалпа çапăçса, вĕсем нимĕçсемпе итальянецсене пĕрре кăна мар çĕнтернĕ.

Далмацире, Словенире тата Хорватире партизансен ятарласа уйăрнă отрячĕсем тăшман коммуникацийĕсене сиенлеççĕ, чугунçул линийĕсене аркатаççĕ, станцисене çунтараççĕ, кĕперсене сирпĕнтереççĕ. Югослави партизанĕсем хăйсен кĕрешĕвĕнче халăх массисем хапăл туса пулăшнă çине таянса тăраççĕ.

Францире партизанла движени пĕр çултанах каярах çеç пирвайхи утăмсем тунă. Халĕ унта пысăк тата пĕчĕк отрядсем çĕршерĕн кĕрешеççĕ.

Юлашки вăхăтра пиншер çамрăк французсем, Германие ĕçлеме яма парлăртса хупăскерсем, вăрмансемпе тусем çине кайса, оккупантсене хирĕç кĕрешме партизан отрячĕсем туса хунă. Турт Савойăри сăртлă районсенче восстани тăвакан французсен шутĕпа вăйĕсене пĕтĕçтерни—çĕршывра партизанла движени вăйлăн сарăлма пуçланине кăтартать.

Парижра, Лионра, Марсельре тата ытти нумай хуласенче те француз патриотсем алла хĕçпăшал тытса, захватчиксене хирĕç тухаççĕ. Бомбăсем пăрахса вĕсем столовăйсене, ресторансене, кафесене, нимĕçсем çӳрекен киносене, хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле войскăсем куçаракан чугунçулсене сирпĕнтереççĕ. Францин патриочĕсем, паровозсемпе вагонсене сиенлеççĕ, поездсене кирлĕ мар вырăна яраççĕ, кашни утăмрах нимĕçсене пысăк сиен кӳреççĕ.

Бельги патриочĕсем «тотальнăй» мобилизацие хирĕç забастовкăсем турĕç, партизанла кĕрешĕве вăйлатса ячĕç. «Кокерил» металлурги комбинатĕнчи 120 рабочи Германие янине хирĕç протестлесе, нумаях пулмасть Льеж, Фламбаль тата Бельгин ытти хулисенчи металл шăратакан заводсенче забастовка пуçланса кайрĕ. Çав заводсем çумне Эвре округĕнчи 16 заводпа 10 шахта хутшăнчĕç. Забастовкăна мĕнпурĕ 30 пин çын хутшăнчĕ. Нумай çынна арестленĕ тата ытти майсемпе те хĕснĕ пулин те, забастовщиксем çирĕп тăчĕç, рабочисене Германие ямалли приказа нимĕçсем пăрахăçа кăлармасăр та вĕсем ĕçе пуçăнмарĕç.

Çĕршывра партизанла движени те ӳсе пырать, вăл пуринчен ытла чугунçулсем çинче паллă. Фашистла чиновниксемпе фашиста майлă сутăнчăксене партизансем хуласемпе промышленность предприятийĕсене пырса тапăннă чухне пĕтерсе тухаççĕ. Халăхшăн тавăракансем нумаях пулмасть Брюссель урамĕнче гитлерла наместникăн сылтăм алли пулса тăракан Вильгельм Хасс полковника вĕлернĕ. Нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсене тапăнасси пур çĕрте те йышлă.

Нимĕçсем Голландире ĕç вăйĕ нумай тупма ĕмĕтленнĕ пулнă. Анчах вăл шанчăк пултланса ларчĕ. Голландецсенчен нумайĕшĕ пытанса пурăнаççĕ, алла хĕçпăшал тытаççĕ.

Польшăра восстани тăвас движени 1943 çулта пысăк ăнăçлăхсем турĕ. Хуласенче те, ялсенче те Польша патриочĕсем, алла хĕçпăшал илсе, хăйсен пурнăçне хӳтĕлеме, нимĕçсенчен ирĕке тухассишĕн кĕрешме çĕкленеççĕ. Нумаях пулмасть Польша патриочĕсем Краковра Польшăри гестапо начальникне—Крюгер генерала вĕлерчĕç. Крюгер хăйĕн тискерлĕхĕпе паларса тăнă. Ăна кăнтăрлах урамра автоматпа персе вĕлернĕ. Вĕлерекенсем тарса пытаннă, вĕсене тупайман.

Партизанла движени Грецире, Албанире, Норвегире вăйлăн ӳссе кайнă. Лăпкă Данире те захватчиксене хирĕçле саботажпа диверси ĕçĕсем йышланса пыраççĕ.

Гитлерла шайкăн ĕнтĕ континента союзниксем десант илсе пырса антарассинчен кăна мар, тылри хăйсен войскисене те оккупациленĕ территорин кирек хăш вырăнĕнче те сыхлама тивет. Патриотсем çавăн пек пĕр чарăнмасăр, тăтăшах пырса çапнисем оккупантсене канăç памаççĕ.

Сталин юлташăн майăн пĕррремĕшĕнчи приказĕ Совет Союзĕнчи партизансемпе партизанкăсене кĕрешмелли боевой программа кăтартса пачĕ. Тăшман тытса илнĕ районсенче халăхсен сарлака массисене ирĕклĕхшĕн пыракан активлă кĕрешĕве хутшăнтарса, тенĕ приказра, партизансем çав майпала совет гражданĕсене нимĕç чуралăхне илсе каясран тата гитлерла тискерсем вĕсене пĕтерессинчен хăтарма пултараççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсен çулпуçĕн çав боевой приказне оккупациленĕ совет районĕсенчи патриотсем кăна мар, Гитлер пусмăрланă пур çĕршывсенчи патриотсем те илтĕç. Вăл Гитлер тылĕнче ирĕке тухассишĕн пыракан партизанла кĕрешĕве вăйлатса ярĕ. Хăйсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен халăхсен чĕрине вăл çĕнĕ вăй, çĕнĕ шанчăк кĕртет.

Ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм этемлĕхĕн пĕртен-пĕр тăшман—фашистла Германия пур. Вăл тăшман вăйлă-ха. Этемлĕхе вăл питĕ нумай сиен тума пултарать-ха. Задача кунта — ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем пĕрлешсе тăшмана пĕтермелле пыра-пыра çапасси пулса тăрать.

Фактсем çаксене кăтартса параççĕ: вăрçăн хальхи тапхăрĕнче партизанла движени паллă вырăн йышăнса тăрĕ. Оккупациленĕ пĕтĕм Европăра халăхăн партизанла кĕрешĕвĕ мĕн тери вăйлăрах тата анлăрах сарăлса пырĕ, гитлерла Германипе унăн «çĕнĕ йĕрки» çавăн чухлĕ хăвăртрах ишĕлĕ, хĕн-хур курнă Европăра çавăн чухлĕ хăвăртрах ирĕклĕх сути хăпарĕ.

Б. ПОНОМАРЕВ.

СТИМСОН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министрĕ Стимсон çапла каланă: Пантеллери утравне хӳтĕлекенсем вĕсене парăнма хушакан ультиматума йышăнман пирки, союзниксем Пантеллери утравне малашне те сывлăшран та, тинĕсрен те вăйлăн атакăласа тăрĕç, тенĕ.

КЭННИНГХЭМА СИРИРИ ТАТА ЛИВАНРИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙСЕН ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИЙĔ ВЫРĂННЕ ЛАРТНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англи тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтерет: вице-адмирала Джон Кеннингхэма, вăхăтлăха адмирал званине парса, Сирири тата Ливанри хĕçпăшаллă вăйсен главнокомандующийĕ вырăнне лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарта ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ:
бухгалтер-ревизор, главнăй бухгалтер заместителĕ, кинотеатр бухгалтерĕ, кинотеатр администраторĕ, металпа ĕçлекен токарьсемпе слесарьсем, склад заведующийĕ, газогенераторнăй машина шоферĕ, кинотеатрти билет сутакан кассирсем, билетерсем, паровой отоплени механикĕ, водопроводчик, уборщицăсем, полотер-вахтер.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Советсен çурчĕ, 3-мĕш хучĕ, 317-мĕш пӳлĕм, ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн кадрсен пайĕ.
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—067, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство контори—9—23.

Типографи № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ Ф 6. 53 34 п. б.